22-мӗш ҫул тухать. Хакӗ (15 пус).

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 июлӗ 5 вырсарникун 155(6090) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ӗҫкунӗсен минимумне кашни колхозникӑн тултармалла

Колхозсен уйхирӗсенче халӗ чи хӗрӳллӗ вӑхӑт пуҫланса кайрӗ. Колхозниксем халӗ ҫум ҫумлаҫҫӗ, ҫӗртме туса пӗтереҫҫӗ, килес ҫывӑх кунсенчех утӑ ҫулас ӗҫ массӑллӑн пуҫланать, ҫав вӑхӑтрах тырпулсене пухса кӗме тата кӗрхи тырӑсене акса хӑварма та хатӗрленес пулать. Ӗҫ нумай. Кашни колхозникпа колхозница валлиех колхозра ӗҫ халӗ анинчен юхса тӑрать. Ӗҫле те туян—ҫакӑ ҫеҫ кирлӗ пирӗн тӑван ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫар валли, колхозниксене хӑйсене валли ытлӑн-ҫитлӗнех тырпул туса илес тесен.

Колхозниксем чылайӗшӗ отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнче ҫапӑҫаҫҫӗ. Колхозсенче ӗҫ вӑйӗ сахалланса юлчӗ. Анчах ӗҫ сахалланмарӗ, нумайланчӗ. Ҫавӑнпа та тылра юлнӑ кашни колхозникпа колхозницӑн халӗ вӑрҫӑчченхинчен чылай нумайрах ӗҫлеме тивет. Ҫавӑнпа та партипе правительство колхозниксем ӗҫлесе тумалли ӗҫкунӗсен минимумне ӳстерме йышӑнчӗҫ.

Пирӗн республикӑри кашни колхозникӑн ҫулталӑкра 120 ӗҫкунӗнчен кая мар ӗҫлесе тумалла. Ҫак хисепрен 30 ӗҫкунне июнӗн 15-мӗшчен тумалла пулнӑ, июнӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа августӑн 15-мӗшне ҫитиччен 30 ӗҫкунӗ тумалла, августӑн 15-мӗшӗнчен пуҫласа октябрӗн 15-мӗшне ҫитиччен 40 ӗҫкунӗ тумалла, ытти ӗҫкунӗсене октябрӗн 15-мӗш хыҫҫӑн ӗҫлесе тумалла.

Кунсӑр пуҫне колхозсенчи 12 ҫулран пуҫласа 16 ҫула ҫитичченхи ҫамрӑксем валли те минимум туса панӑ, вӗсен ҫулталӑкра 50 ӗҫкунӗнчен кая мар ӗҫлесе тумалла.

Партипе правительствӑн ҫак решенийӗ колхозсенчи ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса пыма, колхозниксен ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерме майсем туса пачӗ. Ҫавна пула кӑҫал эпир сурхи ӗҫсене кӗске вӑхӑтрах ӑнӑҫлӑн туса ирттертӗмӗр. Колхозниксем уйхирсенче пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ пирӗн колхозсенче 100—200-шер ӗҫкунӗ тунӑ колхозниксене нумай тӗл пулма пулать. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Пучах» колхозри колхозница Мария Лаврентьева, ача амӑшӗ пулин те, ҫуракинче пӗр кун сиктермесӗр колхозра ӗҫленӗ. Вӑл ҫӗртме тунӑ ҫӗрте те кулленех ӗҫлет, нормӑна тӑтӑшах тултарса пырать. Ҫакӑн пек ӗҫлекен колхозниксем халӗ пирӗн ҫӗршерӗн, пиншерӗн шутланаҫҫӗ. Ишлей районӗнчи «Сатхорнай» колхозра пур колхозниксем те ӗҫкунӗсен малтанхи тапхӑрти минимумне тултарнӑ. Ф. Кудряшова колхозница 150 ӗҫкунӗ тунӑ. Ку районра «Париж Коммуни» колхозра та ӗҫкунӗсен минимумне тултарман колхозниксем ҫук. Паллах, ҫакӑн пек колхозсенче, колхозниксем ӗҫе активлӑн хутшӑннӑ ҫӗрте, ялхуҫалӑх ӗҫӗсем ӑнӑҫлӑн пулса пыма тивӗҫлӗ, ӑнӑҫлӑн пулса пыраҫҫӗ те.

Анчах партипе правительство постановленине ӑнлантарса паман е начар ӑнлантарса панӑ колхозсенче ӗҫкунӗсен минимумне тултарман колхозниксем те чылай тӗл пулаҫҫӗ. Сӑмахран, Красноармейски районри Тельман ячӗпе тӑракан колхозра чылай колхозницӑсем партипе правительство ӗҫкунӗсен минимумне ӳстересси ҫинчен йышӑннӑ постановлени тӗплӗн пӗлмеҫҫӗ. «Ҫулталӑк вӗҫлениччен вӑхӑт нумай-ха, унччен темиҫе минимум тума та ӗлкӗрӗпӗр-ха», теҫҫӗ вӗсем. Ҫавӑнпа кунта 20 колхозник ӗҫкунӗсен минимумне тултарман. Ҫавӑн пекех Советски районри «Комбайн» колхозра та 78 колхозник минимума тултарайман. Ҫавна пула ӗнтӗ ҫак колхозсенче ҫум ҫумлас тата ытти ӗҫсем те юлса пыраҫҫӗ.

Тӳрех калас пулать, ӑнлантару ӗҫне чылай районсенче ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ. Партипе правительство йышӑннӑ тӑрӑх, ӗҫкунӗсен минимумне нимӗнле сӑлтавсӑрах тултарайман колхозниксене судпа айӑплаcа юсанмалла ӗҫлеттермелле, вӗсен ӗҫкунӗ ҫине тухакан тупӑшран 25 процентне тытса юлмалла. Ҫакӑн ҫинчен чылай колхозниксем пӗлмеҫҫӗ, е ӑна тӗрӗс мар ӑнланаҫҫӗ. Ҫитменнине тата колхозсен правленийӗсем те ку тӗлӗшпе постановлени пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ. Сӑмахран, ҫӳлте асӑннӑ «Комбайн» колхозра 78 ҫынран пӗрне те судпа айӑплаcа юсанмалла ӗҫлеттермелле туман. Ҫакӑ ӗнтӗ колхозра дисциплинӑна ҫирӗплетме мар, ӑна хавшатма ҫеҫ пулӑшать.

Партипе правительство ӗҫкунӗсен минимумне ӳстересси ҫинчен йышӑннӑ посановлени колхозлӑ пурнӑҫӑн ҫирӗп законӗ пулса тӑмалла. Ӑна тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пыни колхозсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа туса ирттерме пулӑшать. Ҫавӑнпа та районсенчи партипе совет организацисен, пуҫламӗш парторганизацисемпе ялсовет исполкомӗсен, колхоз правленийӗсен ҫав постановлени ҫинчен колхозниксене, уйрӑмӑнах минимума тултарман колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса парас пулать, вӑл постановлени пурнӑҫа кӗртме мобилизацилес пулать. Ҫапла тусан ҫеҫ тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе эпир ӑнӑҫлӑн туса ирттерме пултаратпӑр.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июлӗн 3-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июлӗн 3-мӗшӗнче **Курск** енче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисен танкӗсен вӑйлӑ та хаяр атакисене сире-сире янӑ. Противник питех те пысӑк ҫухатусем тӳсет. Пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 250 танкне ытла пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 15.000 ҫынна ытла вӗлернӗ.

Белгород тата **Волчанск** енӗсенче пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сире-сире янӑ.

Севастополе 8 уйӑх хушши паттӑррӑн хӳтӗленӗ хыҫҫӑн пирӗн войскӑсем Севастопольрен тухса кайнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Июлӗн 2-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 50 танкне ҫити, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ытла пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, полевой тата зенитнӑй артиллерин 6 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 3 складне сирпӗнтернӗ, 13 автоцистернӑпа бензозаправщика ҫунтарса янӑ, противникӑн пехотине 2 батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Волчанск енчи участоксенчен пӗринче нимӗҫсем пирӗн войскӑсене хирӗҫ 100 танка ҫити атакӑна кӗртсе янӑ. Пирӗн танкистсемпе бронебойщиксем тӑшманӑн машинисене ҫирӗп тӑрса кӗтсе илнӗ. Вӗсем хастарлӑ ҫапӑҫнине пула ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсен вуншар танкӗ ҫӗмӗрӗлсе тата ҫунса юлнӑ.

* * *

Белгород енчи участоксенчен пӗринче противник пехотин пысӑк вӑйӗсем, танксем пулӑшнипе, пирӗн оборонӑна татса кӗме хӑтланнӑ. Пирӗн войскӑсем нимӗҫсен атакине сирсе янӑ, вӗсене пысӑк ҫухату тӳстернӗ. Тепӗр участокра артиллеристсемпе танкистсем противникӑн 27 танкне тата 500 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн уйрӑм участокӗсенче пирӗн артиллери пӗр дзота, 7 блиндажа ишсе антарнӑ, пӗр оруди, пӗр миномет пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн боеприпассем хунӑ 2 складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Пирӗн 19 разведчик, Жученко лейтенант командир пулса ертсе пынипе (Калинин фрончӗ), противникӑн тылне кӗрсе кайса халӑх пурӑнакан пӗр пунктра засада тунӑ. Тепӗр кунне ҫав пункта нимӗҫсем 250 ҫынна ҫити пырса кӗнӗ. Противник йышлӑрах пулнине пӑхмасӑрах, разведчиксем унпа ҫапӑҫма шут тунӑ. Малтан персе янӑ пульӑсем 17 гитлеровеца пӗтерсе хунӑ. Сасартӑк тапӑннӑ пирки ҫухалса кайнӑ хыҫҫӑн ӑса кӗрсен, нимӗҫсем атакӑна кайнӑ. Вӗсем Жученко лейтенант боецсен ушкӑнӗпе пӗрле тӑнӑ ҫурта ҫавӑрса илме пултарнӑ. Хастарлӑ разведчиксем гранатӑсем ывӑтса тата автоматсенчен персе 80 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн ункине татса тухса хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Киев облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ ҫӗрле чугунҫул ҫинче чӑрмав туса хунӑ. Нимӗҫсен войскисене турттарса пыракан поезд ҫав вырӑна пырса ҫӑрансан, партизансем вагонсем ҫине гранатӑсем ывӑтнӑ, пулеметсенчен пенӗ, 150 оккупанта ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫ ефрейторӗ Шмидт нумаях пулмасть Дуденгофен хулине Флершингер ҫемьи патне ҫапла ҫырнӑ: «Пире Францире мӗн чухлӗ ҫӑмӑлтарах пулчӗ, ҫавӑн чухлӗ кунта йывӑртарах килет. Нумаях пулмасть вырӑссем пирӗн транспорт ҫине питӗ вӑйлӑн печӗҫ. Эпир мӗн каҫ пуличченех вилнисене пытартӑмӑр. Вырӑссем питӗ тӗл переҫҫӗ—эпир кӑна туйса илтӗмӗр ӗнтӗ... Юлашки атака пире пысӑк ҫухатусем кӳчӗ, пирӗн виҫӗ кунтан вара каялла чакмалла пулчӗ. Нумайӗшӗ землянкӑсенчен чӗррӗн сиксе тухма пултараймарӗҫ. Хут ҫинче ҫаксене пурне те ҫырса кӑтартма май ҫук. Эпӗ никама та кунта лекме сунмӑттӑм».

* * *

Нимӗҫ унтер-офицерӗ Адольф Мертинг хӑйӗн пиччӗшӗ Август Мертинг патне Шверина (Мекленбург) ҫапла ҫырнӑ: «Сана часах действующи армие яраҫҫӗ пуль. Российӑна каясран хӑтӑласӑнччӗ эсӗ! Кунта пире пур ҫӗрте те вилӗм кӗтсе тӑрать, тата халь хӗллехи кунхисенчен те хӑрушӑрах».

* * *

Румыни халӑхӗ хушшинче юлашки вӑхӑтра вӑрҫа хирӗҫле шухӑш-кӑмӑлсем вӑйланса кайнӑ. Бухарестра полици вӑрттӑн ӗҫлекен организаци тытнӑ, вӑл организаци политикӑллӑ тӗрлӗ юхӑмсен представителӗсем кӗнӗ. Ҫав организаци хутшӑннисем хӑйсем умне Румынине ку вӑрҫӑран пӑрса ярас задача лартнӑ. Организацин хӑйӗн типографи тата хӗҫпӑшал склачӗ пулнӑ.

Июлӗн 4-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июлӗн 4-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле **Курск, Белгород** тата **Волчанск** енӗсенче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Курск енче ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пулса пыраҫҫӗ. Тулли мар даннӑйсем тӑрӑх, Персегов юлташ командир пулса тӑракан чаҫсем виҫӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче противникӑн темиҫе пин салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, вӗсенчен пысӑк пайӗ венгерецсен 2-мӗш корпусӗнче тӑнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех нимӗҫсен 63 танкне ҫӗмӗрнӗ тата ҫунтарса янӑ. Тепӗр участокра тата темиҫе вуншар танка пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен чӗрӗ вӑйне нумай пӗтернӗ. Пирӗн авиаци сывлӑшри ҫапӑҫусенче противникӑн 15 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Волчанск енче пирӗн боецсем питех те пысӑк ҫирӗплӗх кӑтартаҫҫӗ, противникӑн йышлӑ атакисене сире-сире яраҫҫӗ. Старши сержант Прохоровӑн танк экипажӗ нимӗҫсен 4 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн снарячӗ ҫав танкӑн гусеницине ҫӗмӗрсе пулнӑ. Вырӑнтан хускалма пултараймасӑр, танкистсем пулеметсенчен персе тӑнӑ, нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи уйрӑм участоксенче пирӗн артиллеристсем нимӗҫсен 9 дзочӗпе блиндажне, 4 станковӑй пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, артиллери батарейипе минометсен батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине 3 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Фронтӑн пӗр участокӗнче красноармеецсем пӑшалсемпе пулеметсенчен персе нимӗҫсен транспортнӑй самолетне ӳкернӗ.

* * *

7 боец, кӗҫӗн лейтенант Парфенов ертсе пынипе, противникӑн тылне хӑюллӑн кӗрсе кайнӑ. Разведчиксем нимӗҫсен блиндажӗсем патне пынӑ та вӗсем ҫине гранатӑсем ывӑтнӑ. Хӑраса ӳкнӗ гитлеровецсем блиндажсенчен сиксе-сиксе тухнӑ, анчах та пирӗн автоматчиксен вучӗ айне пулнӑ. Кӗске тытӑҫура пирӗн боецсем нимӗҫсен 14 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкса, пӗр ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Белоруссири партизансен Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ 9 кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене 200 ҫынна вӗлернӗ. Партизансем 6 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ, гитлеровецсен продовольстви хунӑ 3 складне ҫунтарса янӑ тата темиҫе кӗпере сирпӗнтернӗ. Противникран 3 станковӑй пулемет, 60 винтовка, 7 автомашина, 35 автомат тата боеприпассемпе продовольстви нумай тытса илнӗ. Ҫав отрядри партизансен пӗр ушкӑнӗ противникӑн чугунҫул ҫинчи 2 эшелонне, фронта каякансене, крушени тунӑ.

* * *

Нимӗҫсен 14-мӗш мотодивизийӗнчи 11-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак Рейльдгольд Яник ҫапла каласа панӑ: «Вӑрҫӑ манӑн ҫемьене пӗтерсе кӳчӗ. Манӑн пичче Антон Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче урасӑр тӑрса юлчӗ. Иккӗмӗш пичче Конрад Вязьма патӗнче вилнӗ. Манӑн ӗҫ анчӗ. Эпӗ тыткӑна лекрӗм, ҫапла ӗнтӗ эпӗ хӑрушлӑхра мар. Фронтра эпӗ темиҫе уйӑх хушши шофер пулса ӗҫлерӗм. Вӑрмана пынӑ чухне Х. пункчӗ патӗнче эпӗ ҫӗмӗрсе пӗтернӗ автомашинӑсене куртӑм. Вӗсенчен пӗрин патӗнче шоферсем ӑна юсама кӑтӑланса тӑратчӗҫ. Вӗсем мана ҫапла каласа пачӗҫ: колонна ҫине партизансем пырса тапӑннӑ, 3 автомашинӑна ҫӗмӗрнӗ, унтан груза илнӗ те тарса кайса ҫухалнӑ. Чи инҫери тылра та салтаксем ялан хӑраса пурӑнаҫҫӗ. Партизансем кӗрешекен районсенче вӗсем килсенчен пӗччеҫшерӗн тухма хӑраҫҫӗ».

* * *

Нимӗҫ салтакне Франца Штрулендорфран унӑн кӗрӳшӗ ҫапла ҫырнӑ: «Эпӗ Российӑра иккӗмӗш хут амантӑм... Кунта хӗрарӑмсем ҫеҫ тӑрса юлнӑ, арҫынсене пурне те фронта илсе кайнӑ. Асту, вут ӑшне ан кӗр. Сана ҫав вут-сулӑмран ҫӑлӑнса тухмашкӑн ҫӑмӑллӑн ҫеҫ аманма пӗтӗм чӗререн сунатӑп. Ҫакна асра тыт: Российӑра пур пӗрех вилӗмсӗр пуҫне урӑх нимӗн те илеймӗстӗн».

* * *

Севастопольрен инҫех мар ларакан Учкуевка поселокӗнчи мирлӗ ҫынсен пӗр ушкӑнӗ тӑшманӑн авиабомбисемпе артиллери снарячӗсенчен хӑтӑлас тесе пӗр штӑлка пытаннӑ. Июнӗн 19-мӗшӗнче ҫав штӑлка нимӗҫсен темиҫе автоматчикӗ ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Гитлерла ирсӗрсем старикcемпе хӗрарӑмсене тата ачасене, 27 ҫынна, асаплантарнӑ, унтан персе вӗлернӗ.

Севастополе 250 кун хушши паттӑррӑн хӳтӗлени

Пирӗн войскӑсем Севастопольрен тухса кайнӑ

Хӗрлӗ Ҫарӑн Верховнӑй Командованийӗн приказӗ тӑрӑх, июлӗн 3-мӗшӗнче совет войскисем Севастополь хулинчен тухса кайнӑ.

Советӑн паттӑр хули нихӑҫан пулман паттӑрлӑхпа ҫирӗплӗх кӑтартса нимӗҫ войскисен вӗҫӗ-хӗррисӗр атакисене 250 кун хушши сире-сире ячӗ. Юлашки 25 кун хушшинче противник хулана ҫӗр ҫинчен те, сывлӑшран та пӗрмаях хаяррӑн штурмласа тӑчӗ. Тылпа тип ҫӗр тӑрӑх ҫыхӑнса тӑма май пулман пулин те, боеприпассемпе продовольстви турттарса пырас ӗҫре йывӑрлӑхсем пулнӑ пулин те, хӑй аллинче аэродромсем пулман пулин те, ҫапла вара, сывлӑшран тапӑннинчен хӳтӗленме кирлӗ майсем ҫителӗклӗ пулман пулин те, совет пехотинецӗсем, морякӗсем, командирӗсемпе политработникӗсем Севастополе хӳтӗлес ӗҫре тӗлӗнмелле геройлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартса пачӗҫ. Севастополе хӳтӗлекен паттӑр воинсене хирӗҫ нимӗҫсем июнь уйӑхӗнче кӑйсен 300 пине ҫити салтакӗсене, 400 ытла танкӗсене тата 900 ҫити самолечӗсене кӑларса ячӗҫ. Севастополе хӳтӗлекенсен тӗп задачи — фронтӑн Севастополь участокне нимӗҫсен фашистла войскисене май пур таран нумайрах пухтарасси тата противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине май пур таран нумайрах пӗтерсе тӑкасси пулнӑ.

Севастополь гарнизонӗ хӑйӗн задачине мӗнле ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртни ҫак даннӑйсенчен питех те лайӑх курӑнать. Севастополь оборонине штурмланин юлашки 25 кунӗ хушшинче кӑна нимӗҫсен 22, 24, 28, 50, 132 тата 170-мӗш пехотнӑй дивизийӗсене, тӑватӑ уйрӑм полка, 22-мӗш танковӑй дивизипе уйрӑм мехбригадӑна, румынсен 1, 4 тата 18-мӗш дивизийӗсене тата ытти соединенисенчи нумай чаҫсене пӗтӗмӗшпех ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Ҫак кӗске тапхӑр хушшинче Севастополь патӗнче нимӗҫсен 150.000 яхӑн салтаксемпе офицерсем пӗтнӗ, вӗсенчен 60.000 ҫынран кая мар вилнӗ, 250 ытла танк, 250 ҫити оруди пӗтнӗ. Хула ҫинчи сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 300 самолетне ытла персе ӳкернӗ. **Севастополе хӳтӗленин пӗтӗм 8 уйӑхӗ хушшинче** тӑшманӑн 300.000 ҫити салтакӗсене вӗлернӗ тата амантнӑ. Севастопольшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче нимӗҫ войскисем питех те пысӑк ҫухатусем тӳсрӗҫ, илессе вара — ванчӑксем ҫеҫ илчӗҫ. Нимӗҫсен нумай кунсем хушши хула ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ авиацийӗ хулана пӗтӗмӗшпе пекех ҫӗмӗрсе пӗтерчӗ.

Совет войскисен июнӗн 7-мӗшӗнчен пуҫласа июлӗн 3-мӗшне ҫитиччен 11.385 ҫын вилнӗ, 21.099 ҫын аманнӑ, 8.300 ҫын пӗр хыпарсӑр ҫухалнӑ, 30 танк, 300 оруди, 77 самолет пӗтнӗ. Боецсене, командирсене тата аманнисене Севастопольрен эвакуацилесе илсе тухнӑ.

Севастополе хӳтӗлени совет халӑхӗн отечественнӑй вӑрҫинче политика тата вӑрҫӑ тӗлӗшпе калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Нимӗҫсемпе румынсен нумай хисеплӗ войскисене хӑйсем патӗнче пухтарса тӑратса, хулана хӳтӗлекенсем нимӗҫ командованийӗн планӗсене пӑтраштарса тата пӑсса ячӗҫ. Севастополе хӳтӗлекенсем хурҫӑ пек ҫирӗп тӑни нимӗҫсен «ҫуркуннехи наступленине» путлантарса лартакан чи пысӑк сӑлтавсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Гитлеровецсем вӑхӑта, хӑвӑртлӑхсене ҫухатрӗҫ, ҫынсем енӗпе ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳсрӗҫ.

Совет войскисем Севастопольрен тухса кайрӗҫ, анчах Севастополе хӳтӗлени Совет Союзӗн отечественнӑй вӑрҫин историне унӑн чи ҫутӑ страницисенчен пӗри пулса кӗрсе юлать. Севастополе хӳтӗлекенсем СССР халӑхӗсен вӑрҫӑри мухтавлӑ традицийӗсене пуянлатрӗҫ. Тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре Севастополе хӳтӗлекенсем вӗҫӗ-хӗррисӗр паттӑрлӑхпа хаярлӑх кӑтартни тата хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешни ылханлӑ оккупантсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре малашне те геройлӑх кӑтартма совет патриочӗсене хавхалантарать.

Севастополе паттӑррӑн хӳтӗлес ӗҫе чаплӑн организацилекенсем ҫинчен — вице-адмирал **Октябрьский**, генерал-майор **Петров**, дивизионнӑй комиссар **Кулаков**, дивизионнӑй комиссар **Чухнов**, генерал-майор **Рыжи**, генерал-майор **Моргунов**, авиаци генерал-майорӗ **Ермаченков**, генерал-майор **Острянов**, генерал-майор **Новиков**, генерал-майор **Коломиец**, генерал-майор **Крылов**, полковник **Капитонин** ҫинчен калакан мухтавлӑх нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсене хирӗҫ пыракан отечественнӑй вӑрҫӑн историне унӑн чи паха страницисенчен пӗри пулса кӗрсе юлать.

СОВИНФОРМБЮРО.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

ХАРЬКОВ ОБЛАҪӖНЧИ ПАРТИЗАНСЕМ. Харьков облаҫӗнчи Н-ски районра 1941 ҫулти ноябрьтен пуҫласа фашистла захватчиксен тылӗнче М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ активлӑн кӗрешнӗ. Майӑн 22-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем партизансем пулӑшнипе оккупантсенчен халӑх пурӑнакан юлашки пункта тытса илнӗ. **Укерчӗк ҫинче:** партизансем ирӗке кӑларнӑ ялта.

Н. ЧИСТЯКОВ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Белгород енче

БЕЛГОРОД ЕНӖ, июлӗн 2-мӗш. (**Телеграфпа, хамӑр корреспондентран**). Нимӗҫсен фашистла войскисем Белгород енче наступлени пуҫласа, малтанах темиҫе вӑйлӑ атака турӗҫ. Анчах ҫав атакӑсенчен пӗри те ӑнӑҫлӑ пулмарӗ. Пирӗн чаҫсем тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн та ҫирӗппӗн тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ, унӑн ҫулне пур ҫӗрте те пӳлеҫҫӗ, ӑна питех те туйтармалла пыра-пыра ҫапаҫҫӗ.

Белгород енчи ҫапӑҫусене икӗ енчен те танксен пысӑк вӑйӗсем хутшӑннӑ. Бронӗллӗ машинӑсем пӗрмаях ҫапӑҫу хирӗнче.

Совет артиллеристӗсем, танкистсемпе пехотинецсем, авиаци пулӑшса тӑнипе, тӑшманӑн танкӗсем пырса ҫапнине ҫирӗппӗн сире-сире пӑрахаҫҫӗ, тӑшмана йывӑр сиен кӳреҫҫӗ. Нимӗҫсен вӑйӗсем кунта пирӗннинчен йышлӑрах пулсан та, вӗсем пирӗн оборонӑна ҫӗнтерме пултараймаҫҫӗ.

Н-ски чаҫӑн позицине хирӗҫ нимӗҫсем темиҫе вуншар танк атакӑна кӗртсе янӑ. Бронӗллӗ машинӑсем хыҫҫӑн тӑшманӑн пехоти пынӑ. Атака пуҫланас умӗн фашистсен темиҫе эскадрильйи пирӗн боевой йӗркесем ҫине вӗҫсе пыра-пыра бомбӑсем пӑрахма темиҫе хутчен те хӑтланса пӑхнӑ. Ҫапӑҫу темиҫе сехете пынӑ. Анчах ҫапах та тӑшман Н-ски чаҫӑн вӑй-хӑватне хавшатма пултарайман. Тӑшмана чи малтан артиллеристсем пырса ҫапнӑ. Нимӗҫсен боевой йӗркисем арканса кайсан тата вӗсен танкӗсем енчен енне ывтӑнма тытӑнсан, пирӗн танксен темиҫе группи засадӑран сасартӑк сиксе тухнӑ. Нимӗҫсем, хӑйсен вӑйӗсем йышлӑрах пулнӑ пирки, ҫапӑҫава йышӑннӑ, анчах вӗсем сӳрӗккӗн те шанчӑксӑррӑн ҫапӑҫнӑ. Ҫав ҫапӑҫу противник хӑйӗн малтанхи рубежӗсем ҫине каялла чакса ларнипе вӗҫленнӗ.

Тепӗр участокра нимӗҫсем ҫапӑҫу хирӗнче темиҫе вуншар танк ҫухатнӑ. Танксен ҫапӑҫӑвӗсем пур ҫӗрте те тенӗ пекех малалла пулса пыраҫҫӗ.

(«**Красная Звезда**», июлӗн 3-мӗш.).

Нимӗҫсем Волчанск енче пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ

ВОЛЧАНСК ЕНӖ, июлӗн 2-мӗш. (**Телеграфпа, хамӑр корреспондентран**). Нумай мар вӑхӑт чарӑнса тӑнӑ хыҫҫӑн, нимӗҫсем Волчанск енче ҫӗнӗ наступлени пуҫласа ячӗҫ. Тӑшман кунта чылай пысӑк вӑйсем пухса тӑратнӑ. Ҫапӑҫусем мӗнпур участокра часах ҫавтери хаярланса кайнӑ. Противник пирӗн позицисене пӗр чарӑнмасӑр атакӑлать, анчах ӑна пур ҫӗрте те вӑйлӑн хирӗҫ тӑрса кӗтсе илеҫҫӗ. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе нимӗҫсем танксен пысӑк мар ушкӑнӗсемпе малалла ҫӗмӗрсе кӗме пултарнӑ, анчах ҫав ушкӑнсене пирӗнисем ҫавӑра-ҫавӑра илсе пӗтерсе тӑкнӑ е малтанхи позицисенех сире-сире пӑрахнӑ. Кун каҫиччен тӑшман нимӗнле ӑнӑҫу та тӑвайман, анчах ҫухатӑвӗсем унӑн ҫавтери пысӑк. Пӗр участокра пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче кӑна нимӗҫсен темиҫе вуншар танкӗ тата боеприпассем нумай пӗтнӗ. Ҫапӑҫу хирӗ ҫын виллисемпе витӗннӗ.

Ҫак участокра ҫапӑҫу уйрӑмах вӑйланса кайнӑ. Уйрӑм рубежсем темиҫе хутчен алӑран-алла куҫнӑ. Кунта противникӑн вӑйӗсем пирӗннинчен ытти участоксенчи шайран нумай йышлӑрах пулнӑ, ҫавӑнпа та вӑл уйрӑмах хаяррӑн атакӑланӑ. Тӑшманӑн атакисене сирсе пӑрахнӑ.

(«**Красная звезда**», июлӗн 3-мӗш).

Пирӗн земляксем

Боецсен сывлӑхӗн хуралҫисем

I.

Вӑл сарлака та патвар ҫын. Вӑл Ленинградра Ҫар медицинин Академинче вӗреннӗ чухне ӑна пурте «патвар мучи» тесе чӗнетчӗҫ. Ҫак «мучи» малтан Шупашкарти рабфакра вӗренетчӗ, вӑл Чӑвашпрофсоветра тата Наркомздрав аппаратӗнче ӗҫлетчӗ, кайран Ҫар медицинин Киров ячӗпе тӑракан Академинче вӗренчӗ. Вӑл яланах юлташӗсемпе туслашма юрататчӗ, яланах дисциплинӑна ҫирӗппӗн пӑхӑнатчӗ.

Унӑн пурнӑҫӗ Хӗрлӗ Ҫар пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Вӑл пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенчех юратма тытӑннӑ. Кайран вара вӑл пуҫӗпех Хӗрлӗ Ҫара куҫнӑ. 1926 ҫулта Шупашкарти рабфака вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн, вӑл ҫар врачӗ пулма шут тытнӑ. Халӗ ӗнтӗ вӑл ҫар врачӗ пулса 12 ҫул хушши ӗҫлет. Хӑй ӗҫленӗ хушӑра вӑл темиҫе кӗнеке ҫырса кӑларма ӗлкӗрнӗ, вӗсене пуриншӗн те ӑнланмалла чӗлхепе ҫырнӑ.

Нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра вӑл паттӑрлӑх, пултарулӑх кӑтартрӗ. Вӑрҫӑра уйрӑмӑнах паларса тӑракан ӗҫсем тунӑшӑн ӑна правительство пысӑк наград—Ленин орденӗ пачӗ. II-мӗш рангри военврач Иван Федорович Федоров, пирӗн земляк, нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре хӑйӗн пурнӑҫне шеллесе тӑмасть. Вӑл Атӑл тӑрӑхӗнче, Шупашкар районӗнчи Шемшер ялӗнче ҫуралса ӳснӗ.

II.

Батальонра Спинов юлташа «пирӗн доктор» тесе чӗнеҫҫӗ. Вӑл орденлӑ Чӑваш республикинче ҫуралса ӳснӗ. Вӑрҫӑ умӗн юлашки 6 ҫул хушшинче вӑл Сюрбеевӑри пуҫламӗш шкулӑн заведующийӗ пулса ӗҫленӗ, унччен Патӑрьелӗнчи педагогика техникумне вӗренсе пӗтернӗ. Хӗрлӗ Ҫарта башеннӑй стрелок пулса ӗҫлеме тытӑннӑ. Пирӗн земляк Федот Михайлович Спинов сахал мар фрицсене ҫула-ҫула тӑкнӑ. Хӑйӗн йывӑр танкӗн экипажне панӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме пулӑшнӑ.

Спинов отличник, ыттисемшӗн примерлӑ боец пулнӑ. Пушӑ вӑхӑтра вӑл яланах боецсене хаҫатсем, интереслӗ кӗнекесем вуласа панӑ, юлташсем амансан вӗсене мӗнле пулӑшмалли ҫинчен ӑнлантарса панӑ, вӑл ӗҫе хӑй туса кӑтартнӑ. Командовани ҫакна асӑрханӑ. Ҫапӑҫура санитар стройран тухсан, ун вырӑнне ӗҫлеме Спинов юлташа уйӑрса лартнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл ҫапӑҫура аманнӑ сахал мар боецсен пурнӑҫне ҫӑлса хӑварнӑ, тӑшман вӑйлӑн персе тӑнӑ вӑхӑтрах вӗсене ҫапӑҫу хирӗнчен иле-иле тухнӑ. Ҫак ӗҫре те паттӑрлӑхӗн, ҫирӗплӗхӗн, хӑюлӑхӗн лайӑх тӗслӗхӗсене, хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартса парать. Командовани ӑна Правительствӑн пысӑк наградине—Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденне пама тӑратнӑ. Ф. Спинов ВКП(б) членӗн кандидачӗ, ӑна санитарнӑй инструктор званине панӑ.

2-мӗш рангри военврач Ив. СТОЛЯРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" звенине тума

СЕНТӖР. Юнга ялсоветне кӗрекен «Родник» колхозри колхозниксем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума пурӗ 8 пин тенкӗ укҫа пухрӗҫ. Вӑл шутра колхоз председателӗ 400 тенкӗ, А. Яндушкина 300 тенкӗ тата ыттисем 160 тенкӗрен кая мар пачӗҫ.

Ф. ЯНДУШКИН,
Н. СУВОРОВ.

Политсектор начальникĕсен помощникĕсен канашлăвĕ

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ облаçсенчи çĕрĕç отделĕсен тата хăшпĕр облаçсемпе крайсенчи совхозсен трестчĕсен политсектор начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен канашлăвне туса ирттернĕ. Канашлура çакăн пек ыйтусем—колхозсемпе совхозсен тата МТС работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче комсомол организацийĕсем хутшăнса ĕçлесси çинчен тата тырпула пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен сӳтсе-явнă.

Докладчиксем—Куйбышев облаçĕнчи çĕрĕç отделĕн политсектор начальникĕн помощникĕ Бабушкин юлташ тата сысна ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен совхозсен Тамбоври тресчĕн политсектор начальникĕн помощникĕ Ломакин юлташ—ăмăртура çамрăксем малти ретре пынине кăтартса паракан чылай фактсем çинчен каланă. Куйбышев облаçĕнчи Шенталински районра ăмăрту организаторĕсем комсомолецсем пулчĕç. Район сурт-пуçсене облаçра пуринчен малтан акса пĕтернĕ. Куйбышев облаçĕнче çурхи ĕçсем пынă кунсенче трактористсен—пятисотниксен движенийĕ çуралчĕ. Ăна пуçарса яраканĕ—çамрăк тракторист Николай Рясин.

Политсектор начальникĕн помощникĕсем Лукаш (Краснодар тĕштыртресчĕ), Заволжский (Орджоникидзе крайĕ), Волков (Тула облаçĕ) Румянцев (Свердловск облаçĕ) тата ытти юлташсем комсомол организацийĕсен çураки вăхăтĕнчи ĕç опычĕсем çинчен тата уборкăна хатĕрленес ĕçри çитĕнӳсем çинчен каласа панă. Çамрăксен бригадисем халĕ комбайнсене мĕнле хатĕрлесе çитернине тĕрĕслеççĕ. Горючи перекетлес тĕлĕшпе комсомолецсенчен контроль посчĕсем тунă. Каçхи хурал ĕçне комсомол хăй çине илнĕ. Краснодар крайĕнчи совхоз çамрăкĕсем ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем 2 пин штука ытла пухнă.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕн заместителĕ Ицков юлташ хăйĕн сăмахĕнче комсомолăн ялти организацийĕсем умне чылай конкретнăй задачăсем лартнă. Комсомол организацийĕсен çум çумлас ĕçре хăйсем организованно пулнине кăтартмалла, тракторсемпе комбайнсем валли запаслă пайсем пухас ĕçе малашне те активлăн туса пымалла, колхозри тимĕрçĕсене тырпул пухса кĕртмелли инвентаре юсанă çĕрте пулăшмалла.

Канашлура ВЛКСМ Центральный Комитечĕн секретарĕ Михайлов юлташ тухса сăмах кларĕ. Тырпул пухса кĕртес кампание хатĕрленес тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшса ĕçлемен хăшпĕр комсомол организацийĕсене вăл çивĕччĕн критикăларĕ. Колхоз çамрăкĕсен вăрçă вăхăтĕнчи пысăк тухăçлă тырпулшăн фронтри пек кĕрешмелле. Тырпул хăй тĕллĕн пулмасть. Ăна ĕçлесе, çĕнтерсе илмелле. Тырпулсене çум курăкĕнчен тасатасси комбайнсене тата уборкăра кирлĕ ытти машинăсене юсасси, звенопа бригадăра ĕçе тĕрĕс организацилесси, малтанхи çапнă тырра, малтан пухнă пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине государствăна парасси—çаксем ĕнтĕ комсомолăн колхозсемпе совхозсенчи, машинно-тракторнăй станцисенчи кашни организацийĕн тĕп ĕçĕ пулса тăмалла. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Иллĕ обязательствăсене пурнăçласа пыратпăр

Хĕрлĕ Чутай машинно-тракторнăй станцийĕн бригадисем хушшинче МТС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн ăмăрту хĕрӳллĕн пырать. Çуракинче Хĕрлĕ ялава илме Макаров бригади тивĕçлĕ пулчĕ. Ирхи çĕртмере тата малтанхи ĕçсенче ăна манăн бригада илесшĕн, çавăншăн кĕрешет.

Çуракине вĕçленĕ хыççăн эпир бригадăн канашлăвне туса ирттертĕмĕр. Унта, çуракинчи ĕçсене пăхса тухнă май, трактористсемпе трактористкăсем ирхи çĕртмере пысăкрах çитĕнӳсем тума хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Трактористка Анастасия Александрова, тĕслĕхрен, канашлура акă мĕн каларĕ:

— Юлташсем, эпир ăнланма тивĕç: кăçал колхозсен уйхирĕсенче эпир çĕр-шывра вăрçă пынă вăхăтра ĕçлетпĕр. Государство пирĕн ĕç çине шанса пăхать, тухăçлăрах ĕçлеме хушать, Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе çĕршыври ĕçхалăхĕ валли çителĕклĕ тарăн тыр-пул туса илме хушать. Çуракинчи ĕçсен планне эпир 137,6 процент тултартăмăр пулсан, ку вăл пирĕн малтанхи ĕç кăна-ха, ирхи çĕртме планне пирĕн 150 процентран кая мар тултармалла. Эпĕ хамăн тракторпа ирхи çĕртмери ĕç планне 200 процент пурнăçлама сăмах паратăп, — терĕ вăл.

Александрова хыççăн Макарова, Королева, Жидков, Федотов трактористсем те ĕç планне 170—150 процентран кая мар тултарма обязательствăсем илчĕç.

Халĕ ĕнтĕ, ирхи çĕртме тăвас ĕç вĕçленсе пынă май, ĕçĕн результачĕсене пăхса тухма вăхăт. Александрова юлташ та тата бригадăри ытти трактористсем те ирхи çĕртме сухинче тата лайăхрах тĕслĕхсем кăтартрĕç. Александрова юлташ хăйĕн тракторĕпе 93 гектар сухаларĕ, çапла вăл хăйĕн ирхи çĕртмери нормине 232 процент тултарчĕ. Ольга Макарова ирхи çĕртмере 40 гектар сухалас вырăнне 82 гектар сухаларĕ, плана 205 процент тултарчĕ. Çавăн пекех ытти трактористсемпе трактористкăсем те хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç. Ăмăртса тата ĕçри ответлăха туйса ĕçленине пула бригада ирхи çĕртмере пысăкрах çитĕнӳ тума пултарчĕ — эпир пурĕ 802 гектар сухаларăмăр, вăл ĕç планне 150 процент тултарни пулать.

Ĕç планне ирттерсе пурнăçласа пыма пире бригадăри кашни тракторист пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлени пулăшать. Бригадăра çитĕнӳсен хăмине тунă. Ĕçре ăнланулла дисциплина тĕп вырăнта тăрать. Тракторсене лайăх пăхатпăр.

Хăшпĕр трактористсем калаççĕ: тракторпа нумай çул ĕçленĕ хыççăн çеç лайăх ĕçleme пулать, теççĕ. Ку пĕтĕмĕшпех тĕрĕс мар. Манăн бригадăра виççĕмĕш çул ĕçлекен трактористсем иккĕн çеç, ыттисем пурте тракторпа кăçал пĕрремĕш çул ĕçлекен çамрăксем. Илер, акă, Анна Королевăнах. Вăл кăçалхи çуракинче плугарь пулса ĕçленĕ, халĕ вăл трактористка, тата ахаль трактористка мар, стахановла ĕçлекен трактористка. Тракторпа ĕçленĕ пĕрремĕш кунах вăл нормăран ирттерсе сухаларĕ. Вăл питĕ тăрăшса ĕçлет. Ирхи çĕртмере вăл хăйĕн нормине 150 процент тултарчĕ.

Çамрăк трактористкăсем нумайĕшĕ пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем социализмлă ăмăртăва çĕклентерсе пыраканнисем. Анчах пирĕн бригадăра та хăшпĕр кăлтăксем пур-ха. Вĕсем ĕçе чăрмантарса пыраççĕ. Трактористка П. Альгешкина çуракинче аван ĕçлерĕ. Халĕ, çĕртме тунă вăхăтра, тивĕçлипе ĕçлеменнипе бригадăна каялла туртса пырать.

Тырăсене пухса кĕртес ĕç çывăхарса килет. Ку ĕçре трактористсен тата лайăхрах, нумайрах ĕçлемелле пулать. Тракторсемпе комбайнсем пĕр минута та ĕçсĕр тăмалла мар. Пирĕн бригадăн 2 комбайн. Вĕсем ĕçе пуçăнма хатĕр. Халĕ бригадăри трактористсемпе трактористкăсем уборкăра тата пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Ф. АФОНДЕРКИН.
2-мĕш номерлĕ бригадăн бригадирĕ.

Çамрăксем уйхирте

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районра пурĕ 43 колхоз. Кашнийĕнчех комсомол организацийĕ пур. Анчах хăшпĕр организацисенче йыш сахалтарах. Хăшпĕр комсомол организацийĕсем 2—3 çынран çеç тăраççĕ. Çав организацисен йышне ӳстерессии пирĕн умри задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем колхоз производствипе таччăн çыхăнса тăма тивĕçлĕ. Уйрăмăнах парти организацийĕсем çук колхозсенче комсомол çине пысăк ответлăх ӳкет. Çав ответлăха пирĕн çирĕп туйса ĕçлемелле.

Çуракинче районĕпе пурĕ 216 комсомолец ĕçлерĕ. Вĕсенчен 6 çын колхоз председателĕсем, 62 бригадир, 12 тракторист, конюхсем, ыттисем рядовой колхозниксем.

Уйрăмăнах «Авангард», «Восход», Ленин ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсем çуракинче аван тĕслĕхсем кăтартрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе çамрăксем (организацин секретарĕ Кондратьева юлташ) 1.750 килограмм кĕл тата машина пайĕсем нумай пухнă. Павлов комсомолец пĕр пĕччен 800 килограмм кĕл пухса панă.

«Большевик» колхозри комсомолецсем уя 115 лав тислĕк, 4 лав кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăларнă, 115 центнер вăрлăх сортланă.

«Восход» колхозра комсомолка Груздева Нина кок-сагыз акас тĕлĕшпе звеньевой пулса ĕçлерĕ. Çураки вăхăтĕнче вăл 33 ĕçкунĕ турĕ. Ярукови сеялкăпа акрĕ, нормăна 110—120 процент тултарса пычĕ.

Колхозри ĕçсене пионерсемпе шкул ачисем активлăн хутшăнаççĕ. «Красный луч» колхозра тимуровецсен командине организациленĕ. Вĕсене Хозяинов комсомолец ертсе пырать. Командăра пурĕ 22 пионер. Вĕсем колхоз пахчине 2.750 тĕм помидор лартнă, кишĕр акнă тата тĕрлĕрен çырласем ӳстереççĕ. Ачасем хастарлă ĕçлеççĕ. Никифоров, Шихранов, Ямасов вĕренекенсем 15—25-шер ĕçкунĕ тунă та ĕнтĕ.

Н. ФОМИН.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Ирхи çĕртме сухине туса пĕтерчĕç

КАНАШ. (Телефон тăрăх). Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз—районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Вăл, çуракине кĕске срокра вĕçлесе, ирхи çĕртме сухине те вăхăтра туса пĕтерчĕ. Колхоз кăçал ирхи çĕртме сухинче 135 гектар сухаланă. Ирхи çĕртмене 5—6-мĕш бригадăсем малтан пĕтерчĕç. Вĕсем нормăна ирттерсе тултарса ĕçлерĕç. Кириллов колхозник 1,5 гектар вырăнне 3 гектар сухаланă.

Çавăнпа пĕрлех колхозра тырра сыхлас тĕлĕшпе уйрăм группа организациленĕ. Ку группăна Иван Мушин ертсе пырать.

И. ЯКИМОВ.

Комбайнсемпе молотилкăсене юсас ĕçе хăвăртлатмалла

ЭЛĔК, июлĕн 3-мĕш. (Телефонпа). МТС комбайнсене май уйăхĕнчех юсама тытăннă. Коммунистка Николаева тата Ефимова юлташсем хăйсен комбайнĕсене тырă вырма тухма пуринчен малтан хатĕрлесе çитерчĕç. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, комбайнсене юсас ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Паянхи куна 12 комбайнран 6-шне çеç юсаса пĕтернĕ. Молотилкăсене юсама тытăнман та-ха.

М. КУСТИКОВ.

Патриоткăсем хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ

Отечественнăй аслă вăрçăн фронтчĕсене, гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешме, колхозлă ялхуçалăх хăйĕн чи паттăр çыннисене ячĕ.

— Кайăр, вутлăн-хĕмлĕн çĕмĕрĕр тăшмана, çĕрне таплаштарăр ирсĕрсене, — терĕç колхозницăсем, упăшкисемпе ывăлĕсене фронта ăсатса. Хăйсем ялхуçалăх ĕçне тимленчĕç, фронта кайнисем вырăнне тăрса, никĕçанхи пек мар харсăррăн ĕçлеме тытăнчĕç.

Клавдия Семенова, Федора Боброва, Анна Алексеева конюхсем пулса ĕçлеççĕ. Лаша вăйĕ ялхуçалăхĕнчи ĕçсенче халĕ чи кирли. Вĕсем вăйлă, самăр пулни ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать. Кăна хĕрарăмсем пĕлеççĕ. Лашасене вĕсем лайăх пăхаççĕ. Кĕрсе пăхăр-ха витене. Витен урайĕ — пӳрт урайĕ пек шурă, тислĕк мар, çӳп-çап йăваланса выртнине те кураймăн. Клавдия Семенова старши конюх пулса ĕçлет. Вăл лашасене пăхас ĕçе лайăх йĕркелесе пырать. Конюхсем лашасене вăхăтра ĕçе салатаççĕ, ĕçрен килсен канăва тăратса лайăх тăрантараççĕ.

Варвара Флоренцева — пахча-çимĕç тăвакан бригадăн бригадирĕ. Кăçал бригада 0,75 гектар купăста, 0,20 гектар хăяр, 0,25 гектар махорка, 1 гектар выльăх кăшманĕ, 0,25 гектар сухан, 0,50 гектар кишĕр лартнă. Бригада Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă, пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илессишĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлет. Мария Федорова, Дария Александрова, Дария Иванова тата ытти колхозницăсем те çимĕçсене лайăх ӳстерессишĕн ĕçрен таталмасăр ĕçлеççĕ.

Çуракинче 9 хĕрарăм кулленех суха турĕç, 3 хĕрарăм сӳрелесе пычĕç, 7 хĕрарăм тырă акрĕç. Вĕсем хăйсен вăйне çирĕп шанса ĕçлени халĕ куç умĕнче. Тырăсем вăйлăн ӳсеççĕ, татах та лайăхрах ĕçлеме чĕнсе тăраççĕ. Тырăсене вăхăтра, пĕр тăкаклямасăр пухса кĕресси халĕ чи пысăк ĕç пулса тăрать. Кăна тума колхозăн бригадисем хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ.

Хĕрарăмсем колхозра ертсе пырас ĕçре те ĕçлеççĕ. Акă, Т. Максимова — бригадир, А. Петрова — ферма заведующийĕ, М. Архипова — учетчица пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ.

Фронтри боецсене тивĕçлĕ пек ĕçлеççĕ колхозницăсем. Вĕсен патриотла ĕçĕ нимĕç фашизмне тĕп тăвас вăхăта çывхартать.

С. ФЕДОРОВ.
Советски район.

ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН ĔÇНЕ ВĂЙЛАТАССИШĔН!

Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн çĕршывра совет патриотизмне вăйлăн çĕклентерсе ячĕ. Кашни совет çынни çакна лайăх пĕлсе тăрать: вăрçă пирки расход нумай тухать, вăл расходсене саплас пулать, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене кăçал пĕтĕмпех аркатса тăкмашкăн пирĕн хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пур енчен те, кулленех тата вăйлăн пулăшса тăрас пулать.

Оборона валли укçа пухас ĕçре перекет кассисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Перекет кассисене пирĕн халăх лайăх пĕлет, вĕсене юратать, хăйсен укçисене çав кассăсенче усрама тăрăшать.

Вăрçă пуçлансанах перекет кассисенчен укçа илес тĕлĕшпе вăхăтлăха çакăн пек йĕрке тунăччĕ: пĕр уйăх хушшинче перекет кĕнекипе 200 тенкĕрен ытла илме юрамастчĕ. Пĕлтĕрхи август вĕçĕнчен пуçласа урăхла йĕрке тунă: 1941 çулти июнĕн 23-мĕшĕ хыççăн хывнă укçасене вкладчик хăй мĕн чухлĕ илес тет, çавăн чухлĕ илме пултарать.

Уйăх хушшинче 200 тенкĕ çеç илме юранă вăхăтра та перекет кассисене укçа хывакансен хисепĕ ӳссе пынă, нумайĕшĕ пиншер тенкĕ пыра-пыра хывнă, перекет кассине хывнă укçана унтан нумайччен илмесĕр тăнă, мĕншĕн тесен перекет кассинче выртакан укçа нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкма пулăшнине пĕлсе тăнă. Август уйăхĕ иртсессĕн перекет кассисене укçа хывакансен хисепĕ тата ытларах ӳсрĕ. Иртнĕ уйăхсем хушшинче пирĕн республикăра перекет кассисене укçа çĕнĕрен виçĕ миллион тенке яхăн хывнă.

Анчах перекет кассисем халăх хушшинчи укçана, пуринчен ытла ялти çынсен аллинчи укçана, перекет кассисене хывтарас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен-ха. Перекет кассисен колхозниксен перекетленĕ укçисене перекет кассисенче усраттарас тĕлĕшпе массăллă агитациллĕ ĕçе анлăн сарса ярас пулать, колхозниксене укçа хывас, укçа илес йĕркесемпе лайăх паллаштарас пулать, комсодсен ĕçне йĕркелесе вăйлатса ярас пулать, перекет кассисенче ĕçлекенсен укçа хывакансемпе хăтăрашса калаçас йĕрке пулмалла мар, перекет кассисем ĕçлекен вăхăт вырăнти условисемпе килĕшсе тăмалла, перекет кассисене халăх патне тата ытларах çывăхартас пулать, çав шутпа шултăра предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче çитес кунсенчех перекет кассисем уçас пулать.

Перекет кассисен ĕçне вăйлатса ярасси, перекет кассисене хывакан укçа хисепне ӳстерсе ярасси—чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăрать.

Перекет кассисене укçа ытларах хывса, тăшмана аркатса тăкмашкăн темиçе миллион тенкĕ хушса парар, тăшмана аркатса тăкас вăхăта çывăхартар!

А. ПОКРОВСКИЙ,
Чăваш АССР-ĕнчи Перекет кассисемпе госкредит управленийĕн начальникĕ.

Ютçĕршывсенче

Англипе Германия июнь уйăхĕнче сывлăшра çапăçнин итогĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ июнь уйăхĕнче Англи çинче тата унăн сырнĕсем çинче сухатусем тумаи. Тĕнĕл держависем 35 самолет çухатнă. Англи авиацийĕ Европа çинче 271 самолет (тĕнĕл держависем 65 самолет) çухатнă. Сывăх Хĕвелтухăçĕнче Англи авиацийĕ 151 самолет, тĕнĕл держависем 165 самолет çухатнă (вĕсенчен 53 самолетне Мальта çинче персе ӳкернĕ). Инçетри хĕвелтухăçĕнче мĕнле çухатусем пулни çинчен хыпарсем çук.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БРЕМЕН ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: июлĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин йышлă бомбардировщикĕсем Бремен çине вĕçсе пырса тапăннă. Хулара пушарсем нумай тухнă. Бомбардировщиксем тата противникăн Голландири аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Çыран хĕрринчи авиацин самолечĕсем Голланди çыранĕсем патĕнче противникăн суднисене атакăланă. Çав операцисенчен 13 бомбардировщик каялла таврăнман.

АМЕРИКĂН ЕВРОПАРИ ВОЙСКИСЕН КОМАНДУЮЩИЙĔ ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ÇУРÇĔР ИРЛАНДИЕ ПЫНĂ

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ, Çурçĕр Ирландире Америка войскисемпе пĕрле тăракан скер, çапла пĕлтерет: Америкăн Европăри войскисен командующийĕ Эйзенхауэр генерал Лондонран Çурçĕр Ирландине пынă, вăл унта Америка войскисене пăхса тухнă.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер противник Англи войскисен Эль-Аламейнри позицийĕсене атакăланă. Англи империйĕн çăмăл куçакан тата бронетанковăй вăйĕсем контратака тунă. Каç пуличченех пынă çапăçу хыççăн противник, Англи позицийĕсене сиенлеймесĕр тата çухатусем тӳссе, хĕвеланăç еннелле чакнă.

НЬЮ-ИОРК, июлĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви фронтран килнĕ юлашки хыпарсем çине кăтартса çапла пĕлтерет: Англи вăйĕсем Александрирен хĕвеланăçнелле 62 мильăра нимĕç войскисене çавăрса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен вăйĕсене Каттара патĕнчи кăнтăрти флангран илсе кайса, вĕсене Эль-Аламейна атакăлама куçараççĕ. Импери войскисем, кăнтăр енчи флангра тăнăскерсем, тинĕс хĕррине нимĕçсенчен хыçаларах вырăнта пырса тухнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль, — ăна палата алă çупса кĕтсе илнĕ,—çапла каланă: Египетра хальхи вăхăтра çавтери аслă та йывăр çапăçу пулса пырать, унтан питĕ пысăк хыпарсем кирек хăш вăхăтра та килсе çитме пултараççĕ.

Критиксене ответлесе, Черчилль: Англия Ливире 8 уйăх каярах пуçласа янă наступлени вăл ăнăçсăрлăх пулман,—тенĕ. Пирĕн çарсем,—тенĕ Черчилль,—40.000 çынна тыткăна илнĕ, противника 400 мильăна яхăн сирсе пăрахнă, противникăн вăйлăн çирĕплетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Пирĕн çарсем противника Киренаика чиккине çитиех хăваласа янă. Çав çапăçусем вăхăтĕнче пирĕннисем 10.000 нимĕçе тыткăна илнĕ. Эпĕ çав кĕрешĕве питех те ăнăçлă кĕрешӳ тесе йышăннисĕр пуçне урăхла нимĕнле те йышăнма шутламастăп. Киренаикăпа Египетри вăрçăра юлашки икĕ эрнере пулнă ăнăçсăрлăхсем çав районри лару-тăрăва кăна мар, çавăн пекех тата мĕнпур Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнчи лару-тăрăва та тĕпренех улăштарчĕç. Эпир 50.000 çын ытла çухатрăмăр, вĕсенчен ытларахĕш пайĕ тыткăна лекнĕ. Эпир хамăрăн запассене тăшмана парас мар тесе анлăн тата йĕркеллĕн пĕтерсе пынă пулсан та, вĕсенчен чылайĕшĕсем противникăн аллине лекрĕç».

Тобрук çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнни пирки каласа, Черчилль çапла пĕлтернĕ: Тобрука парасси çинчен крепоçăн командирĕ решени йышăннă пулнă, çакă вăл питех те кĕтмен çĕртен пулса иртнĕ. Черчилль малалла çапăçусем мĕнле пыни çинчен тĕплĕнрех чарăнса тăнă тата Англи войскисем тӳснĕ çухатусем çинчен пĕлтернĕ.

Черчилль çакна кăтартса панă: Англи правительстви юлашки икĕ çул хушшинче Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çарсене тĕреклетес тĕлĕшпе çавтери нумай вăй хурса ĕçленĕ. «Эпир,—тенĕ Черчилль,—Нил шывĕн тăрăхне 4.500 танк ăсатрăмăр тата Российйăна 2.000 танк ытла ăсатрăмăр, вырăссем нимĕçсен çарне хирĕç кĕрешнĕ çĕрте çав танксемпе пĕлсе те ăнăçлăн усă кураççĕ».

Авиацин ыйтăвĕсем çине куçса, Черчилль çапла каланă: «Нимĕн иккеленмелли те çук, Германи çине бомбардировщиксемпе наступлени туса пыни Германие хирĕç наступлениллĕ вăрçă туса пыма кирлĕ пирĕн алăри чи хăватлă майсенчен пĕри пулса тăрать. Пирĕн атакăсем вăйсăрланас çуккине, вĕсем тăтăшах вăйланса пырассине, çапла вара нимĕçсем пирĕн союзниксене хĕсесси вăйсăрланса пынине тата çав атакăсем противника подводнăй лодкăсемпе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тума чăрмантарнине нимĕçсем пĕлеççĕ».

Малалла Черчилль çапла каланă: «Иртнĕ çулăн вĕçĕнче пуçласа, эпĕ Рузвельт патне кайса килнĕренпе, пĕрлешнĕ нацисен пĕтĕмĕшлĕ вăйĕсем чылай ӳсни çинчен тата вĕсен çитĕнĕвĕсем чылай лайăхланни çинчен эпĕ шантарсах калатăп.

Россия хăйĕн территорийĕ çине тапăнса кĕнĕ захватчика хирĕç вăйлăн хирĕç тăни чи паллă ĕç пулса тăрать (алă çупаççĕ). Факт куç умĕнчех: çуллахи уйăхсем иртсе пыраççĕ пулсан та, Гитлер çак вăхăта çитсе Российйăна хирĕç,—Курскпа Харьков енĕсенчи хальхи атакăсене вăл пысăк наступлени тесе шутламасть пулсан,—пысăк наступлени пуçлаймарĕ. Вырăссен правительствипе вырăс халăхĕ Хĕвеланăçĕнчи Англи чĕлхипе калаçакан демократиллĕ державăсемпе юнлă жертвăсем туса тата ĕненсе çыхăнса тăраççĕ, вĕсем малашне те вăйлăн та çирĕппĕн, авăнми тĕреклĕн тăрса çапăçĕç. Пуриншĕн те паллă, вырăссем Гитлера тĕлĕнтерчĕç. Вĕсем малашне ăна татах та ытларах тĕлĕнтерĕç, тесе шутлатăп эпĕ. Çакă вăл хальхи тапхăра палăртса тăракан питех те витĕмлĕ факт.

Тепĕр пысăк факт вăл—союзниксен авиаци хăвачĕ ӳссе пыни. Ку ӳсĕм çавтери пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать».

Лăпкă океан çинчи лару-тăру пирки чарăнса тăрса, Черчилль çапла каланă: хальхи вăхăтра союзниксен Лăпкă океанăн мĕнпур Кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи лозунгĕ—наступлени пулса тăрать, тенĕ.

Индия халĕ чылай вăйланчĕ. «Лăпкă океан çинчи тинĕс-çар вăйĕсен хăвачĕ татăкланах пирĕн майлă улшăнса çирĕпленчĕ»,—тенĕ Черчилль.

Унтан Черчилль вырăссем Севастополе халиччен курман паттăрлăхпа тата çирĕплĕхпе хӳтĕлени çинчен, Харьков районĕнче массăллăн контратакăсем туни çинчен чарăнса тăнă. «Çаксем пурте ĕнтĕ, çавăн пекех тата çуллахи вăхăт иртсе пыни те пире хамăрăн вăйсене Роммель генералăн çарĕсене пĕтерсе тăкмашкăн пухса тăратма май пачĕ. Хальхи вăхăтра Египетри кĕрешӳ вăйланса, хĕрсех пырать. Халĕ унта çапăçу мĕнпе пĕтесси пирки ĕç татăлать, çав çапăçăвăн малашлăхĕ аслă. Англирен, çавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен яракан пысăк вăйсем халĕ ĕнтĕ çул çинче.

Юлашкинчен çакна каламалла: эпир хамăр пурнăçшăн кĕрешетпĕр (алă çупаççĕ). Çĕнтерӳ валли пурне те тунă тесе калама пирĕн право çук. Эпир хамăрăн палатăн тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртсен—правительствăна пулăшсан е ăна улăштарсан çакă вăл çаплах пулĕ. Палата правительствăна улăштарма пултараймасть пулсан, унăн правительствăна пулăшмалла».

«Пирĕн çине тапăнакансем питĕ сахаллăн тăрса юлаççĕ пулсан, нациллĕ правительствăна шанманни çинчен калакан резолюцишĕн сасăласси çав резолюцин авторĕсене шанманни пулса тăрсан, ун чухне вара паллах, Англин мĕнпур тусĕсем тата пирĕн ĕçĕн шанчăклă çыннисем хавасланнах саламласа кăшкăрĕç тата эпир сирпĕтсе антарма тăрăшакан тирансен хăлхисенче пытару чанĕ çапнă пек янраса кайĕç». (Хыттăн алă çупаççĕ).

* * *

Малтанах пĕлтернĕччĕ, Черчилль тухса каланă хыççăн общинăсен палати правительствăна шанманни çинчен калакан резолюцие нумай йышлăрах сасăсемпе (475 сасă—25 сасса хирĕç) сирсе янă.

МАРИИНСКО-ПОСАДСКИЙ ЛЕСОТЕХНИЧЕСКИЙ ТЕХНИКУМ НАРКОМЛЕСА РСФСР

об'являет прием студентов на 1942—43 учебный год.

Техникум готовит: 1) техников-лесохозяйственников, 2) техников-технологов по лесозаготовкам, 3) техников по строительству, ремонту и эксплоатации лесовозных дорог.

Срок обучения три года.

В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 30 лет, имеющие образование в об'еме 7 классов средней школы.

Окончившие 7 классов средней школы с отметками «отлично» по основным предметам, а также окончившие 7 классов средней школы в 1941—42 г.г. с отметками «отлично» и «хорошо» по основным предметам принимаются в техникум без экзаменов. Лица же, сдавшие экзамены за 7 классов средней школы в 1941—42 году не на «отлично» и «хорошо», принимаются в техникум без экзаменов лишь при наличии свободных мест.

Лица, окончившие 8, 9, 10 классов средней школы, принимаются на 2-й курс без экзаменов.

Поступающие в техникум, за исключением вышеуказанных лиц, подвергаются приемным испытаниям по русскому языку, математике и Конституции СССР.

Прием заявлений производится с 1-го июня по 10-е августа 1942 г. К заявлению должны быть приложены следующие документы: автобиография, свидетельство об образовании, о рождении, справка о состоянии здоровья, об отношении к воинской повинности, а лица, достигшие 16-летнего возраста, вместо свидетельства о рождении должны пред'явить паспорт при личной явке.

Приемные экзамены с 20 по 28 августа 1942 года.

Студенты обеспечиваются общежитием, постельными принадлежностями и питанием в студенческой столовой.

Техникум имеет: учебно-опытную дачу, автомашину, электростанцию, вполне оборудованные кабинеты, звуковую кино-установку, радиоузел.

Адрес: гор. Мариинский Посад, Майская, 30.

ДИРЕКЦИЯ.

МАРИИНСКО-ПОСАДСКАЯ ФЕЛЬДШЕРСКАЯ ШКОЛА НАРКОМЗДРАВА ЧУВАШСКОЙ АССР

об'являет прием учащихся на первые курсы отделений фельдшеров-лечебников и санитарных фельдшеров на 1942—1943 учебный год.

Срок обучения полтора года.

Правом поступления в фельдшерскую школу пользуются все граждане от 15 до 35 лет, имеющие образование не ниже 7 классов неполной средней школы.

Прием производится без испытаний.

Заявления подаются на имя директора школы с приложением следующих документов:

1) свидетельства об образовании,
2) свидетельства о рождении,
3) справки о состоянии здоровья,
4) одной фотокарточки с собственноручной подписью и почтовых марок на 60 копеек (для ответа).

Паспорт пред'является лично при явке.

Прием заявлений с 1-го июня до 15 августа с. г.

Начало занятий с 1 сентября 1942 года.

Принятые обеспечиваются общежитием.

Окончившие НСШ на «отлично» зачисляются на стипендию. При школе имеются хорошо оборудованные специальные кабинеты и столовая.

Заявления направлять по адресу: гор. Мар. Посад, Чувашской АССР, Майская улица, дом № 31, Фельдшерская школа.

2—2 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 538 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64